Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнченпе тухать

87 (7727) № ✻ Шăмат кун, 2009 çулхи октябрĕн (юпа) 31-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Çивĕч ыйтусенчен пĕри

## Республикăри пĕрремĕш объект – Муркашра



***Ытти çĕрти пекех, пирĕн районта та йăлари каяшсене, çӳп-çапа вырнаçтарас ыйту çивĕч тăрать. Çак таранччен усă курнă Сĕнтĕрти свалка тулса çитнĕ ĕнтĕ. Çавна май çывăх вăхăтрах Ахмане ялĕ патĕнче хута яма палăртнă хальхи требованисене тивĕçтерекен йăла каяшĕсен полигонĕ – питех те пысăк пĕлтерĕшлĕ объект. Сăмах май, кун пек объект республикипе те пĕрремĕш. Пĕрремĕш утăм вара нихăçан та çăмăл пулман.***

***Социаллă пĕлтерĕшлĕ çак объекта хута ярас ĕçсем епле пынипе анлăрах паллаштарас тĕллевпе полигон тунă вырăнта республикăри массăллă информаци хатĕрĕсен представителĕсемпе ĕçлĕ тĕл пулу иртрĕ. Унта ЧР çут çанталăк ресурсĕсен тата экологи министрĕ С.Э. Дринев, район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов тата ыттисем хутшăнчĕç.***

**В. ШАПОШНИКОВ.**

*Сăн ӳкерчĕкре: вырăнта министрпа сӳтсе явмалли ыйтусем çук мар.*

*Ĕçлĕ тĕл пулу пирки тĕплĕнрех хаçатăн çитес номерĕнче каласа парăпăр.*

Кĕскен

## Муркашра – Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен эксперчĕсем

Иртнĕ кунсенче Муркашри тĕп больницăра АПШри туберкулеза хирĕç кĕрешекен агентствăн эксперчĕсем пулчĕç. Вĕсемпе пĕрлех пирĕн района республикăри туберкулеза хирĕç кĕрешекен диспансерăн тĕп врачĕ Ж. Еленкина та çитрĕ. Çак делегаци Муркаш районĕнче туберкулез чирне малтанхи тапхăрсенчех тупса палăртас ĕç еплерех пулса пынине тишкерес тĕллевпе килнĕ.

Çавра сĕтел хушшинчи калаçу шăпах çак ыйту тата туберкулезпа чирлисен сиплевне еплерех йĕркелесси тавра пулчĕ. Муркашри тĕп больница Пĕтĕм тĕнчери реконструкци банкĕн проектне хутшăннă май кунта ятарлă лаборатори оборудованийĕ вырнаçтарса микроскопи центрне туса унăн ĕçне йĕркелесе янă ĕнтĕ. Çак центрпа хăнасем тĕплĕн паллашрĕç, кăсăкланчĕç.

Муркашри тĕп больницăн тĕп врачĕ В. Данилов экспертсене кунта туберкулеза хирĕç кĕрешессипе мĕнле ĕçлесе пыни çинчен каласа пачĕ. Ĕçе ырласа хăнасем пирĕн опыта ытти территорисенче те йышăнмаллине палăртрĕç.

Делегаци Шетмĕпуçĕнчи пĕтĕмĕшле врач офисĕпе те паллашрĕ.

Камăн сăвăм пысăкрах?

**РАЙОНТИ ПĔРЛЕШӲЛЛĔ ХУÇАЛĂХСЕНЧЕ ЮПА УЙĂХĔН 30-МĔШĔНЧЕ ПĔР ĔНЕ ПУÇНЕ ВĂТАМРАН МĔН ЧУХЛĔ СĔТ СУНИНЕ КĂТАРТНИ (килогрампа)**

**Колонкăсенче: 1. Кăçал сунă. 2. Пĕлтĕрхипе танлаштарсан («–» – сахалрах).**

| | 1 | 2 |
|---|---|---|
| Е. Андреев яч. хис. | 7,6 | 0,5 |
| «Восток» | 7,1 | -3,3 |
| «Герой» | 9,9 | 0,9 |
| Ильич яч. хис. | 10,8 | 2,4 |
| Ленин яч. хис. | 8,0 | 4,0 |
| «Оринино» | 11,3 | 3,4 |
| «Передовик» | 8,5 | 2,2 |
| «Свобода» | 10,9 | 0,4 |
| Суворов яч. хис. | 10,8 | 2,5 |
| «Ударник» | 11,0 | -0,5 |
| Чапаев яч. хис. | 7,2 | 3,1 |
| «Чемеево» | – | -3,0 |
| Чкалов яч. хис. | 7,7 | -3,4 |
| «Хлебороб» | 2,7 | -2,0 |
| **РАЙОНĔПЕ** | **9,9** | **1,4** |

**Сĕт хакĕ хресчене татах нумай такăнтарĕ-ши? Хуравĕ çук. Анчах çак хурав çине пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче сунă сĕт урлă пăхсан, çĕр ĕçченĕ ĕнерен «инçерех те инçерех тарса» пыни курăнать. Çулталăк хушшинче ĕнесен йышĕ пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче 388 пуç чакнă, паян сумалли ĕнесен кĕтĕвĕ 2169 пуçран тăрать. Çакна пула хуçалăхсем эпир пăхнă кун пĕлтĕрхинчен 300 килограмм сĕт сахалрах сунă (21580 кг). Çав вăхăтрах пĕр ĕне пуçне талăксерен вăтамран тивекен сăвăм иртнĕ çулхинчен пысăкрах пулни упранса юлнă выльăхсемпе ферма ĕçченĕсем тухăçлăрах усă курма мехел çитерни пирки калать.**

Районăн паллă çыннисем

## Орден кавалерĕ паян та ĕçре

***Хуçалăхсем хушшинчи «Моргаушская» строительство организацийĕ кăçал 50 çул тултарчĕ. Çамрăк организаци ЧР Президенчĕ палăртнă программăсене пурнăçлассипе çанă тавăрса ĕçлет. Кунта вăй хуракансем те ытларах çамрăксем. Вĕсен вăтам ӳсĕмĕ 35 çул. Апла пулин те кунти çамрăксем аслă юлташĕсен ĕç опытне туллин алла илессипе ĕçлеççĕ.***

***Çамрăксене ĕçре пулăшса пыракансенчен уйрăмах кирпĕч хуракансен бригадирне Геннадий Егорович Петрова (сăн ӳкерчĕкре) ырăпа палăртассăм килет. Çулсем иртнине пăхмасăрах паян та вăл хăйĕн ĕçĕнче ăсталăхпа палăрса тăрать. Г. Петров асăннă строительсен организацийĕнче 1974 çултанпа. Малтанах кирпĕч хуракан пулса ĕçе кӳлĕннĕ. Тăрăшулăхне кура икĕ çултанах çамрăк арçын кирпĕч хуракансен бригадине ертсе пыма пуçлать. Унтанпа вĕсем çĕкленĕ нумай хваттерлĕ вуншар çуртра çынсем пурăнаççĕ ĕнтĕ, кунти строительсем тунă вуншар çурт районăн социаллă пурнăçпа экономика аталанăвне малалла уттарать.***



***Ĕç вăхăтĕнчи Хисеп грамотисемсĕр пуçне 1981 çулта ĕçри тăрăшулăхшăн «Хисеп палли» ордена, 1999 çулта «Хура тăпраллă мар зонăри агропромстройăн хисеплĕ строителĕ», 2008 çулта «Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ строителĕ» ятсене тивĕçнĕ бригадир паян та кулленех ĕçе тухать. Строителĕн çăмăл мар ĕçĕнче çамрăксене ĕç вăрттăнлăхне вĕрентет.***

***«Моргаушская» МСО çĕкленĕ çуртсем паян района илем кӳреççĕ. Кунти строительсем юсаса хăт кĕртекен çуртсем çине район çыннисем ытараймасăр пăхаççĕ.***

**А. БЕЛОВ**
**сăн ӳкерчĕкĕ.**

**Чăваш Республикин Президенчĕн Указĕ**

## Чăваш Республикинчи Ача прависемпе ĕçлекен уполномоченнăй çинчен

1. Александр Васильевич АНДРЕЕВА Чăваш Республикинчи Ача прависемпе ĕçлекен уполномоченнăя уйăрса лартас.
2. Çак Указ ăна алă пуснă кунран вăя кĕрет.

**Чăваш Республикин Президенчĕ Н. ФЕДОРОВ.**
Шупашкар, 2009, юпа, 27, 73 №.

Поэтăмăр юбилейне халалласа

## «Çӳретпĕр Çеçпĕл çулĕпе»

Чăвашсен паллă поэчĕ Çеçпĕл Миши çуралнăранпа кăçал 110 çул. Çак юбилее халалласа районта октябрь-ноябрь уйăхĕсенче тĕрлĕ мероприятисем иртеççĕ.

Пур библиотекăра та выставкăсем йĕркелеççĕ, шкулсенче вара тематика кĕтесĕсем туса хума палăртнă. «Çӳретпĕр Çеçпĕл çулĕпе» ятлă викторина район шайĕнчех иртĕ, çамрăк поэтсен конкурсĕ вара çамрăксем хушшинче талантлă ачасене тупса палăртма пулăшĕ. Кунсăр пуçне литература касĕсем, Çеçпĕл Мишшине халалланă поэзи каçĕсем те иртмелле. Пирĕн район çыннисем республика шайĕнче иртекен викторинăра та хăйсене тĕрĕслеме пултарĕç. Шкул ачисем вара Интернет-олимпиадăна хутшăнĕç.

Район администрацийĕн сайчĕ çинче ятарлă баннер тăвассипе те ĕçсем пуçланнă ĕнтĕ. Çак тата ытти мероприятисем мĕнле пурнăçланса пынине район хаçачĕн страницисенче вуласа пĕлме май пулĕ.

Граждансене йышăнаççĕ

## «Единая Россия» партин Муркаш районĕнчи уйрăмĕн обществăлла йышăну пӳлĕмĕнче граждансене ноябрь уйăхĕнче хăйсен ыйтăвĕсемпе йышăнмалли график

| Хăш кун | Йышăнмалли вăхăт | Кам йышăнать |
|---|---|---|
| Ноябрĕн 3-мĕшĕ | 13-15 сех. | **Владимир Германович Никитин,** район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ – капиталлă строительство, архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕн ертӳçи |
| Ноябрĕн 6-мĕшĕ | 13-15 сех. | **Лилия Юрьевна Тарасова**, район администрацийĕн йĕркелӳпе кадрсен, право енĕпе тивĕçтерессин тата вырăнти самоуправлени органĕсемпе ĕçлекен пайĕн ертӳçи |
| Ноябрĕн 10-мĕшĕ | 13-15 сех. | **Юрий Александрович Иванов**, район пуçлăхĕ, «Единая Россия» партин вырăнти уйрăмĕн политканашĕн секретарĕ |
| Ноябрĕн 13-мĕшĕ | 13-15 сех. | **Владислав Григорьевич Данилов**, ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ, районти тĕп больницăн тĕп врачĕ |
| Ноябрĕн 17-мĕшĕ | 13-15 сех. | **Платон Павлович Давыдов**, «Ударник» сăнавпа производство хуçалăх директорĕ, политканаш секретарĕн çумĕ |
| Ноябрĕн 20-мĕшĕ | 13-15 сех. | **Виктор Александрович Морозов**, ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ |
| Ноябрĕн 24-мĕшĕ | 13-15 сех. | **Владимир Аркадьевич Калинин**, депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕ, «Муркашри сĕт-çу завочĕ» акционерсен усă обществин директорĕ, «Единая Россия» партие майлисен канашĕн председателĕ |
| Ноябрĕн 27-мĕшĕ | 13-15 сех. | **Игорь Васильевич Николаев**, депутатсен районти Пухăвĕн председателĕ, Ильич яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕн председателĕ |

Саламлатпăр



Юратнă мăшăра, ырă, ăшă кăмăллă аннене, кукамая, хисеплĕ те хаклă тăванăмăра – **Фелицата Тимофеевна МАКСИМОВАНА** октябрĕн 31-мĕшĕнче 60 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр.

Хаклă аннеçĕм, эсĕ пире пурнăç парнелесе ура çине тăратрăн, çирĕп сывлăхлă ӳстерсе пурнăç çулĕ çине кăларма вăй-хална шеллемерĕн, яланах ырă канашсем патăн. Санăн ырă кăмăлу, чун ăшши пире кунсерен вăй-хăват парса, çунат хушса тăраççĕ. Ку вăл пирĕншĕн – иксĕлми телей. Сана сумлă юбилей ячĕпе саламласа нумай çул пурăнма çирĕп сывлăх, çемьере килĕшӳ, пурнăçра телейпе ăнăçу сунатпăр.

**Саламлаканĕсем: амăшĕ, мăшăрĕ, ывăлĕпе хĕрĕ, кĕрӳшĕ, 2 мăнукĕ, çывăх тăванĕсем, кӳршисем.**



Хаклăран та хаклă çыннăмăра – аннене, хунямана, асаннене, çывăх тăванăмăра, тăхлачăна – Çатракасси ялĕнче пурăнакан **Полина Гурьевна ФЕДОРОВАНА** паян 50 çул тултарнă ятпа чĕререн тухакан чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Пире, виçĕ ачине, ӳстерсе ура çине тăратнăшăн çĕре çити пуç таятпăр. Паянхи кун та вăл тăван хуçалăхра вăй хурать.

Эс пурришĕн эпир савăнатпăр. Сана малашне те тапса тăракан çăл куç пек иксĕлми вăй-хăват, нумай çул тăванусене савăнтарса пурăнма çирĕп сывлăх, тумхахсăр кун-çул, тулли телей сунатпăр, ĕмĕтленнĕ ĕмĕтӳсем пурнăçланччăр.

**Саламлаканĕсем: ашшĕпе амăшĕ, хĕрĕсемпе ывăлĕ, кĕрĕвĕ, кинĕ, мăнукĕсем, тăхлачисемпе хăтисем, çывăх тăванĕсем.**